25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АВГУСТ
29
ШĂМАТКУН
202 (6137) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çирĕп те паттăр боецсем вĕрентсе хатĕрлер

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман пирĕн çĕршыв ăшнелле кĕрсе каяс, нефть вырăнĕсене туртса илес, Атăл çине тухас ĕмĕтпе хăйĕн мĕнпур вăйĕсене çапăçăва кĕртсе ячĕ. Çак çапăçусенче пирĕн совет воинĕсем тăшмана хирĕç хăюллăн, паттăррăн çапăçаççĕ, нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Хĕвеланăçĕнчи тата Калинински фронтсенче вунпилĕк талăк хушши пынă çапăçусенче кăна нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 45 пин çынна çити пĕтерсе тăкнă.

Вăрçă фрончĕсенче всевобуч йĕркипе çар ĕçне вĕреннĕ çĕршер тата пиншер боецсем пур.

Пирĕн Чăваш республикинчи всевобуч пункчĕсенче çар ĕçне вĕреннĕ боецсем те фронтра хастарлăн çапăçаççĕ. Вĕсем çар ĕçне малаллах вĕренсе пыраççĕ.

Çĕршыва вăрçăра çапăçма пĕлекен воинсем кирлĕ. Хурçă пек çирĕп тăрса, çар ĕçне пĕлсе çапăçни кăна вăрçăра çĕнтерӳ тума май парать. Çакăнтан ĕнтĕ совет гражданĕсен пурин те çар ĕçне вĕренме, кирек хăш сехетре те, кирек хăш минутăра та Хĕрлĕ Çар ретне тăрса тăшмана хирĕç çапăçмашкăн хатĕр пулма кирли уççăнах курăнать. Пирĕн совет çыннисем всевобуч пункчĕсенче, пĕр-пĕр специальноçа вĕрентекен подразделенисенче çар ĕçне вĕренсе алла илме тăрăшаççĕ. Снайперсем, пулеметчиксем, бронебойщиксем, çар ĕçĕн ытти мастерĕсем пулма пĕренеççĕ. Нумай пулмасть всевобучăн иккĕмĕш черетĕнче вĕренекенсем 110 сехетлĕ программăна вĕренсе тухрĕç. Вĕсенчен чылайĕшĕ пĕлӳсене тĕрĕслени çĕрте «отлично» тата «хорошо» паллăсем илчĕç, çар училищисене вĕренме кайрĕç, Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕç.

Çак кунсенче всевобучăн виççĕмĕш черечĕн вĕренĕвĕ пуçланать. Çĕнĕрен çар ĕçне вĕренме тытăнакансенчен лайăх боецсем вĕрентсе хатĕрлес тесен, малтанхи кунсенчех всевобуч пункчĕсенче çарти пек çирĕп йĕрке тумалла, халичченхи çак ĕçре пулнă çитменлĕхсене шута илсе, вĕсем ку черетре те пуласран пыхланас пулать.

Чи малтанах всевобуч пункчĕсенче командирсемпе политработниксем пулса ĕçлеме çар ĕçне, политикăллă ыйтусене лайăх пĕлекенсене уйăрмалла. Асра тытас пулать: командир хăй вĕрентекен ĕçе лайăх пĕлнинчен вĕренӳ ăнăçлă пулассине килет, политрук политикăллă воспитани ĕçне лайăх туса пынинчен боецсем çирĕпленсе çитесси, тăшмана хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешес шухăш-кăмăллă пулассине килет. Командир всевобуч боецĕнчен пур занятисенче те хытă ыйтсан, ротăра, взводра, отделенире çарти пек йĕркелĕх тусан, çирĕп дисциплина тусан, паллах, вĕренӳри пахалăх кирлĕ вырăнта тăрĕ.

Алла хĕçпăшал тытма пултаракансене пурне те çар ĕçне вĕрентесси совет государствин законĕ. Çак закона вăрçă вăхăтĕнчи пек пурнăçа кĕртсе пырас пулать. Вĕренме çӳремелли кун кашни боецăнах занятине вăхăтра пымалла, командирсем вĕрентнине тимлĕн итлемелле, хĕçпăшалсене, çапăçмалли мелсене тĕплĕн вĕренмелле. Всевобуч боецĕн çар ĕçне вĕренме пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшас пулать. Дисциплинăна пăсакан, командирпа комиссарăн приказне пурнăçа кĕртмен боец тăван çĕршыв умĕнче преступлени тăвать. Яланах çакна асра тытас пулать: вăрçă вăхăтĕнче мĕнпур вăя хурса ĕçленипе пĕрлех, çар ĕçне çине тăрса вĕренни кирлĕ.

Всевобуч командирĕсемпе политработникĕсен задачи — кĕске срокрах çар ĕçне пĕлекен, хăюллă, хастарлă, паттăр боецсем вĕрентсе хатĕрлесси пулса тăрать. Халĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче чухне нумай вăхăт хушши вĕрентсе тăма вăхăт çук. Çавăнпа та всевобуч пункчĕсенчех боеца вăрçăра мĕн кирлĕ, çавсене вĕрентсе çитермелле тăрăшмалла. Всевобуч боецĕ вăл тĕллесе отлично пăшал, пăшалпа тĕл пеме, штык вĕççĕн çапăçма, граната тĕл ывăтма, окоп чавса пытанма, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма отлично вĕренсе çиттĕр.

Çар ĕçне вĕрентесси ăнăçлăн пулса пытăр тесен, кашни боеца уйрăммăн вĕрентмелле. Боец тăвакан кашни йăнăшах çийĕнчех тӳрлетмелле, кашни ĕçе лайăх туса пĕлмелле туса çитерме тăрăшмалла. Талпишĕ вĕрентессине те çав майлах туса пымалла. Боец отделенире тата подразделенире пулса, оборонăра чухне тата наступлени туса пынă чухне вăрçма пĕлтĕр тесен, ăна хăйне тĕрĕс тытма, пĕлсе çапăçма вĕрентес пулать. Вăл чее, пуçаруллă, хăюллă пулма хăнăхса пытăр.

Всевобуч боецĕ, çакна асра тыт: пали есĕ — тылра вăрçă ĕçне вĕренетĕн, ыран сана Хĕрлĕ Çар ретне чĕнме пултараççĕ. Çавăнпа та çар ĕçне тăрăшса вĕрен!

ХРОНИКА

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Оборона Халăх Комиссарĕн Пĕрремĕш заместителĕ пулма арми генералне Г. К. Жукова уйăрса лартнă.

Ялсоветсен председателĕсемпе депутачĕсем!

Тырпулсене кăтартуллăн пухса кĕртессишĕн кĕрешĕр, колхозсене ĕçре куллен пулăшса пырăр!

ВКП(б) Калинински райкомĕпе райсовет исполкомĕ тăратнă тăрăх, тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

9. **«Броневик» колхоз** (колхоз председателĕ **М. Федоров**). Колхоз 15 ĕçкунĕнче тырă вырса пĕтернĕ, колхозра пĕрлешсе апатланассине тата ачасен яслине лайăх организациленĕ. Государствăна 120 центнер тырă пана.

10. **«Новый путь» колхоз** (колхоз председателĕ **И. Никитин**). Тĕштырă культурисене 15 ĕçкунĕ хушшинче вырса пуçтарнă. **Н. Михайловăн** бригади лайăх ĕçленĕ. Çак бригадăн машинисем пурте пĕр чарăнусăр ĕçленĕ, кашни кунхи нормăна 120—130 процент тултарса пынă. Тырпул тăратмалли плана колхоз 50 процент тултарнă.

11. **«Комсомол» колхоз** (колхоз председателĕ **Канюков**). Колхоз тырпулсене 15 ĕçкунĕ хушшинче вырса пĕтернĕ. Çак ĕçе чи малтан **Д. Егоров** бригади вĕçленĕ, унăн бригадинчи çавапа çулакан колхозниксем нормăна кашни кунах 120—150 процент тултарса пынă.

12. **«Путь Ленина» колхоз** (колхоз председателĕ **В. Титов**). Колхоз тырă вырас ĕçсене 17 ĕçкунĕнче вĕçленĕ. **А. Смородинова** ертсе пыракан чи лайăх бригада тĕштырă культурисене 15 ĕçкунĕ хушшинче вырса пĕтернĕ. Унăн бригадинчи **Е. Востряков** тата **В. Смородинова** машиноведсем вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçленĕ, вĕсем нормăна кашни кунах 130—150 процент тултарса пынă. Государствăна тырă памалли плана колхоз 100 процентчĕпех тултарнă.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĂÇАЛХИ АВГУСТĂН 25-МĔШ ТĔЛНЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Кĕрхи тата çурхи тырăсене вырнă (процентпа)	Кĕрхи тата çурхи тырăсене çапнă (процентпа)
Улатăр	80,2	15,4
Элĕк	90,9	13,3
Вăрнар	84,5	13,3
Йĕпреç	71,8	20,0
Ишлей	80,6	15,3
Калинински	93,3	14,2
Канаш	85,5	15,4
Куславкка	71,3	35,7
Комсомольски	86,4	15,7
Красноармейски	97,7	24,5
Хĕрлĕ Чутай	93,9	21,8
Кувакино	65,8	35,1
Сĕнтĕрвăрри	80,5	16,8
Октябрьски	78,0	16,0
Первомайски	71,7	15,9
Пăрачкав	73,1	24,4
Советски	88,4	11,7
Сĕнтĕр	85,1	16,7
Вăрмар	85,5	27,5
Çĕрпӳ	86,9	13,1
Шупашкар	82,4	20,2
Чкаловски	72,9	10,5
Шăмăршă	76,7	14,8
Шăхасан	81,5	16,1
Çĕмĕрле	82,6	19,5
Етĕрне	83,6	14,8
Елчĕк	77,6	15,6
Тăвай	89,1	22,2
Шупашкар хули	83,1	16,2
ЧАССР тăрăх	82,4	18,0
Августăн 20-мĕш тĕлне пулнă	69,1	12,1

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĂÇАЛХИ АВГУСТĂН 25-мĕш ТĔЛНЕ КĔРХИ КУЛЬТУРĂСЕНЕ МĔН ЧУХЛĔ АКНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Кĕрхи культурăсене акнă (процентпа)
Улатăр	40,8
Элĕк	72,2
Вăрнар	52,0
Йĕпреç	39,7
Ишлей	73,1
Калинински	60.5
Канаш	76,1
Куславкка	60,6
Комсомольски	52,9
Красноармейски	86,4
Хĕрлĕ Чутай	69,8
Кувакино	36,8
Сĕнтĕрвăрри	58,0
Октябрьски	62,0
Первомайски	45,3
Пăрачкав	39,0
Советски	66,1
Сĕнтĕр	78,7
Вăрмар	50,7
Çĕрпӳ	63,8
Шупашкар	72,6
Чкаловски	44,1
Шăмăршă	43,5
Шăхасан	61,5
Çĕмĕрле	48,8
Етĕрне	66,0
Елчĕк	69,4
Тăвай	62,8
Шупашкар хули	80,0
ЧАССР тăрăх	59,7
Августăн 20-мĕш тĕлне пулнă	37,5

Комсомолецсем примерлă

КАЛИНИНО. Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозри комсомол организацийĕ (секретарĕ Н. Кошкин) вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлесе пырать. Организацисенчи кашни комсомолец уборкăри ĕçсен организаторĕ пулса тăчĕ. Ăçта комсомолецсем ĕçре пример кăтартаççĕ, унта уборка уйрăмăнах ăнăçлăн пырать.

Комсомолец П. Языков ертсе пыракан 6-мĕш бригада колхоз производствинчи пур ĕçсенче те малта пырать. Бригадăра комсомолецсем колхозниксемпе колхозницăсене кулленех фронтри хыпарсем çинчен вуласа ăнлантараççĕ. Çавна пула колхозниксем кулленхи ĕç нормине яланах тултарса ĕçлеççĕ.

Комсомолец И. Петров сменăра жнейкăпа 4 гектар вырас вырăнне 5,5 гектар вырать. Т. Степанова, Т. Зуева комсомолецсем те тырă вырнă çĕрте ĕç нормисене 115—125 процент таран тултараççĕ. Комсомолецсемех колхозри чи активлă агитаторсем шутланаççĕ. Н. Ларин, Т. Степанова юлташсем чи лайăх агитаторсем шутланаççĕ. Вĕсем агитациллĕ ĕçе кулленех колхозниксем ĕçленĕ вырăнта туса пыраççĕ.

Кашни бригадăрах боевой листоксем тухса тăраççĕ. Вĕсем çинче колхозниксен çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсене çутатса пыраççĕ. Уйхирте ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче кулленех политикăллă-массăллă ĕçе туса пыни ĕç дисциплинине чылаях çирĕплетрĕ. Уборкăн малтанхи кунĕсенче ĕçре çитменлĕхсем чылай пулнă, Ĕçе кайран тухса, малтан кĕрекен, кăнтăр канăвĕсенче те 2—3-шер сехет ларакан колхозниксем пулнă, вĕсем ĕç нормисене тултарса пыман.

Массăсем хушшинчи ĕçе вăйлатнă хыççăн, бригадăсенче боевой листоксем тухма тытăнсан, ĕç дисциплини çирĕпленчĕ. Колхозниксем ĕçе 4—5 сехетрех тухса, сĕм тĕттĕмччĕнех выраççĕ. Кăнтăрлахи канура та 1 сехет кăна канаççĕ.

Халĕ çĕнĕ тырра çапса, типĕтсе государствăна парассипе ĕçлеççĕ. Государство умĕнчи парăмсене вăхăтра татассишĕн, фронта çителĕклĕ таран пулăшса пырассишĕн, тылра лайăх ĕçлесе пырассишĕн кашни колхозник тата колхозница тăрăшать.

И. ФЕДИНИН.

ПАХА ТĔСЛĔХСЕМ

ИШЛЕЙ. Хăймалакассинчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз çурхи тырăсене 73 гектар вырса, кĕлтисене çĕмеле хыврĕ. Колхоз председателĕ Осипов тата пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ Григорьев юлташсем хăйсем те колхозниксемпе пĕрле ĕçлеççĕ. Пĕрремĕш бригада иккĕмĕш бригадăпа ăмăртса ĕçлет.

Çуртыррисене вырнă çĕрте çак колхозра пурĕ 30 кĕреплеллĕ çава ĕçлет. Кĕреплеллĕ çавапа çулакансем М. Семенов, Я. Васильев, Н. Федорова юлташсем кулленех ĕç нормине 200—250 процент тултарса пыраççĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

Комбайнер Иштяков 250 гектар вырса пухрĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, августăн 28-мĕш. **(Телефонпа).** Трактористсемпе комбайнерсем хушшинче социализмла ăмăртса ĕçлесси анлăн сарăлса пырать.

Комбайнер Иштяков юлташ «Янга Турмыш» колхозăн хирĕнче ĕçлет. Вăл кашни кунах 18—20 гектар вырать, машинăна пĕр минута та усăсăр лартмасть. Августăн 26-мĕш тĕлне вăл пĕтĕмпе 250 гектар вырса пухрĕ, хăйне панă задание 125 процент пурнăçа кĕртрĕ, çав вăхăтрах 110 килограмм горючи перекетлерĕ. Вăл кăçал комбайнпа 500 гектар вырса кĕртме обязательство илчĕ, паянхи куна хăйĕн обязательствине 50 процент пурнăçа кĕртрĕ те ĕнтĕ, комбайнпа тырă вырас ĕçе малаллах туса пырать.

Иштяков юлташпа ăмăртса ĕçлекен Тихомиров комбайнер та каях юлмасть. Вăл 200 гектар çинчи тырра вырса пухрĕ, плана 115 процент пурнăçларĕ.

Августăн 26-мĕш тĕлне МТС комбайнсемпе 2.083 гектар çинчи тырра вырса пухнă, вăтам шутпа илсен, кашни комбайн пуçне 130 гектар пухса кĕртнĕ. Çӳлте асăннă комбайнерсемсĕр пуçне, уборкăра комбайнерсем Панков, Портнов, Трофимов юлташсем 170 гектаршар вырнă, Зубков 160 гектар çинчи тырра вырса пухнă.

Анчах уйрăм комбайнерсем чăтма çук начар ĕçлеççĕ. Любимов юлташ 40 гектар, Сергеев юлташ — 55, Шатинов — 80 гектар кăна вырнă-ха.

Тырпулсене хăвăртрах пухса кĕртмелле. Комбайнерсен пурин те кăçалхи уборкăра 300 гектаршар вырса пухма тăрăшас пулать.

А. ДОЛГОВ.
МТС политотделĕн начальникĕ.

Çуртыррисене 4 кунта вырса пĕтерчĕç

ЕТĔРНЕ. **(Телефонпа).** Кĕçĕн Сĕнтĕрти «Великан» колхоз уйхир ĕçне лайăх организациленине пула çуртыррисене 4 кун хушшинче вырса пĕтерчĕ.

Тырă вырнă çĕрте колхозниксем пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлесе, ĕç тухăçлăхне кулленех ӳстерсе пычĕç. Колхозницăсем З. Филиппова, В. Филиппова, О. Антонова кашни кунах 0,15 гектар тырă вырчĕç.

Халĕ колхоз авăн çапать, кĕрхи тырăсене кӳрет. Августăн 27-мĕш тĕлне 39 гектар çинчи тырă кĕлтисене капана хывнă. Кĕлте кӳрес ĕçе колхоз тепĕр икĕ кунтан пĕтĕмĕшпех вĕçлет.

Кĕрхи тырăсене планран ирттерсе акаççĕ

ЕТĔРНЕ. **(Телефонпа).** Районри колхозсенче Тула облаçĕнчи «Заря» ялхуçалăх артелĕн чĕнĕвне сӳтсе-яваççĕ, нумай колхозсем кĕрхи тырăсене планран ирттерсе акаççĕ.

Поляккăри Киров ячĕпе тăракан колхоз планран ирттерсе 44 гектар, Стрелецкри Буденный ячĕпе тăракан колхоз — 25 гектар, Иваньковăри «Путь к социализму» колхоз — 30, Чакакарти «Парижская Коммуна» колхоз — 28, Чуралайри Киров ячĕпе тăракан колхоз — 20, Мăн Сĕнтĕрти «Комбайн» колхоз — 24 гектар акаççĕ.

Районĕпе пĕтĕмпе кĕрхи тырăсене планран ирттерсе 600 гектар акса хăварма йышăннă.

И. ЛЬВОВ.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. **(Телефонпа).** Колхозсем нумайĕшĕ кĕрхи тырăсене планран ирттерсе акса хăвараççĕ, районра пĕтĕмпе план тăрăх пăхнинчен 500 гектар ытларах акаççĕ. Мăн Улхашри «Красноармеец» колхоз кăна планран ирттерсе 115 гектар акать, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз — 10 гектар, «Лесной огонек» колхоз — 25, «Искра», колхоз—25, Турханти «Комбинат» колхоз 35, Хударти Ленин ячĕпе тăракан колхоз—30 гектар акма йышăннă. Ытти колхозсем те кĕрхи тырăсене планран ирттерсе акма палăртнă.

Х. ЛИСИН.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Тула облаçĕнчи, Серебрянные Пруды районĕнчи «Заря» ялхуçалăх артелĕн членĕсем чĕнсе калани çине колхозниксем конкретлă ĕçсемпе ответлеççĕ. Халĕ колхозсем чылайĕшĕ кĕраки ĕçĕсене вĕçлерĕç, вĕсем планран ирттерсе 900 гектар çине кĕрхи тырăсем акса хăварнă.

Кивуйри «1 Мая» колхоз планран ирттерсе 12 гектар çине тырă акнă. Ку колхозра кĕрхи тырăсене акассине пĕтĕмĕшпех машинăсемпе туса ирттернĕ.

Планран ирттерсе «Новый быт» колхоз 5 гектар çине, «За коммунизм» колхоз 3 гектар çине тырă акса хăварнă.

Я. СИГАЙ.

Укерчĕк çинче: Совет Союзĕн Геройĕ генерал-майор ФЕДЮНИНСКИЙ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Хĕвеланăç фронтĕнче

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, августăн 26-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç вăйлăн çапăçса малалла—Хĕвеланăçнелле куçаççĕ. Противник урса кайса хирĕç тăрать, çуркуннех çирĕплетнĕ лайăх рубежсенче чарăнса тăма хăтланать. Анчах Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем хăвăрттăн пырса çапнипе фашистла йыткĕтĕвĕсен ирĕксĕрех каялла чакма лекет.

Н-ски соединенин боецĕсем икĕ эрне хушшинчи хаяр çапăçусенче халăх пурăнакан 40 пункта ытла оккупантсенчен ирĕке кăларнă, нумай трофейăсем: тĕрлĕ калибрлă 63 оруди, 11 танк, 282 станковăй тата ручной пулемет, 1000 ытла винтовка, автоматсемпе минометсем, боеприпассемпе тумтирсен 6 складне тытса илнĕ. Хаяр çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем фашистсен 12 бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă.

Çапăçусем кăнтăрла та, çĕрле те чарăнмаççĕ. Совет чаçĕсем юханшывсем урлă, минăсем лартса тухнă хирсем урлă паттăррăн та хăюллăн каçаççĕ, противникăн оборонине çĕмĕреççĕ, фашистсене аркатмаллах пыра-пыра çапаççĕ. Тăшман çапăçăва çĕнĕ резервсем кĕртет.

Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă ялсенчи халăхсем красноармеецсене пĕтĕм чун-чĕререн савăнса кĕтсе илеççĕ. Пирĕн чаçсем халăх пурăнакан пĕр-пĕр пункта йышăнса илсенех, сывăхри вăрмансенчен, çуртсен подвалĕсенчен чĕрĕ тăрса юлнă çынсем, гитлеровецсен тискер ĕçĕсене тӳссе ирттернĕскерсем, тухаççĕ. Куçĕсенчи куççулĕсене чараймасăр, вĕсем хăйсене фашистла ирсĕрсем асаплантарни çинчен каласа параççĕ. Пĕр ялта тахăшĕ çĕрле фашистсен фельдфебельне касса вĕлернĕшĕн кăна нимĕçсем урам варрине мĕнпур хĕрарăмсемпе ачасене хăваласа пухнă та вĕсене пулеметсенчен пере-пере вĕлерсе пĕтерме тытăннă. Унтан ирсĕрсем яла вут тивертнĕ.

Пирĕн войскăсем малалла куçнине чарас тесе, нимĕçсем куллен темиçе хутчен контратака тăваççĕ. Анчах красноармеецсем çирĕп те чăтăмлă пулса, хурçă пек çирĕп дисциплина тытса, тăшманăн контратакисене сиресире пăрахаççĕ, халăх пурăнакан пунктсене пĕрин хыççăн тепĕрне ирĕке кăлараççĕ, тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пыраççĕ.

Тăшманăн хĕллех çирĕплетсе хатĕрленĕ оборонине Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче çĕмĕрнĕ. Пирĕн чаçсем, тăшмана Хĕвеланăçнелле хĕссе тата ăна çавтери пысăк çухатусем тӳстерсе, малаллах куçаççĕ.

А. ТОЛОКОЛЬНИКОВ,
Полковой комиссар.

Калинин фронтĕнче

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, августăн 26-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Пирĕн пĕр часть, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе, наступлениллĕ операцисене пĕр чарăнмасăр малалла туса пырать. Вăйлă çапăçусем хыççăн совет войскисем халăх пурăнакан вуншар пунктсене тытса илнĕ, тăшмана хыçран йĕрлесе пырса район центрĕ пулса тăракан хулана çĕмĕрсе кĕнĕ.

Фашистсем каялла чакнă чухне шыв урлă каçмалли кĕперсемпе каçăсене ишĕлтернĕ. Анчах та çакă вăл пирĕн боецсене чарса тăрайман. Понтонсем парассине кĕтсе тăмасăрах, красноармеецсем вырăнти çынсенчен темиçе кимĕ тупнă та юханшыв урлă хăйсем кăна мар каçнă, вĕсем хĕçпăшал та илсе каçарнă.

Наступлениллĕ çапăçусем малалла пулса пыраççĕ.

Кельнри, Лейпцигри тата Мюнхенри чура рынокĕсем

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, августăн 24-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Пирĕн фронтри участоксенчен пĕринче нимĕçсен 56-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтаксем фашистла Германие ирĕксĕрлесе илсе кайнă совет гражданĕсен пурнăçĕ çинчен каласа панă.

Тыткăна лекнисем çапла пĕлтернĕ: «Нимĕç войскисем йышăнса илнĕ совет хулисемпе ялĕсенче пĕлтерӳсем çыпăçтарса тухнă. Çав пĕлтерӳсенче пĕтĕм халăха—арçынсене, хĕрарăмсене тата хĕрачасене, 15 çулран пуçласа 45 çула çитнисене, пĕр тăхтаса тăмасăр комендатурăна пыма хушнă. Приказсенче каланă тăрăх, комендатурăна срокра пыманнисене персе пăрахаççĕ.

Комендатурăна пынă хыççăн тепĕр кунне вырăссене ушкăнĕ-ушкăнĕпе вокзалсене яраççĕ. Кунта вĕсене товарнăй вагонсем çине лартаççĕ те Германие ялхуçалăхĕнче, фабрикăсенче тата уйрăм çынсен килĕсенче ĕçлеме яраççĕ.

Вырăссене тиенĕ эшелонсене Кельн, Лейпциг, Мюнхен пек пысăк хуласене яраççĕ. Унта çитсен вĕсене концентрациллĕ лагерьсене вырнаçтараççĕ. Кунта кашниех работник тата работница сутăн илме пултарать. Мĕнле те пулин çĕр хуçине рабочи кирлĕ пулсан, вăл лагерь начальникĕ патне каять те унпа пĕрле хăйне кирлĕ çынна суйласа илет.

Йывăр ĕçпе асапланса пĕтнĕ хĕрарăмсемпе хресченсем час-часах хăйсене хăйсем вĕлереççĕ».

Çакăн пек кăтартса пани çине тыткăна лекнĕ нимĕçсем В. Зайгт, Г. Фишер, К. Зейб тата ыт. те алă пуснă.

Е. КАПЛАНСКИЙ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Августăн 27-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Ржев хули хĕррисенче, Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, çавăн пекех тата Прохладный, Моздок районĕсенче тата Краснодартан кăнтăртарахра çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Августăн 26-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 танкне çунтарса, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине ытла, горючи тултарнă 10 автоцистернăна пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 2 батарейине пусарса лартнă, [illegible] складне тата горючи тултарнă 2 склада сирпĕтерсе янă, противникăн пехотине пĕр батальона çити саплалса янă, [illegible] пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче участокĕсенчен пĕринче пирĕн войскăсем çапăçса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан пĕр пункта, противник çирĕплетнĕскере, çĕмĕрсе кĕрсе илнĕ. Çав участокри çапăçусенче нимĕçсен 26 танкне персе çĕмĕрнĕ тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтернĕ. Пирĕн чаçсем [illegible] вăрмана противникран тасатнă. [illegible] ри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 6 самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç контратакăсем тунă. Пирĕн чаçсем вăйлăн хирĕç тăнине пула противник питех те пысăк сухатусем тусе. Гитлеровецсем çапăçăва танксемпе пехотăн çĕнĕ йышĕсене кĕртсе-кĕртсе ярасçĕ. Н-ски чаçăн участокне тăшман малалла кайма [illegible] тата пирĕн войскăсене флангран пырса çапма хăтланнă. Пирĕн боецсем контратака тунă та [illegible]. 11 танк тата нимĕç пехотине 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем противникăн танкисемпе пехотин 10 атакине сирсе янă, 13 танк тата нимĕçсен пехотине 2 батальона çити пĕтерсе тăкнă.

Клетская районĕнче пирĕн чаçсем активлă çапăçнă. Икĕ кун хушшинче пирĕн войскăсем нимĕçсен 18 оруди, 122 пулемет, 20 автомашина тата ытти çар хатĕрĕсене тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн артиллеристсем противникăн [illegible] 3 йывăр танкне тата 5 вăтам танкне пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан пĕр пункта [illegible] Н-ски часть противника хирĕç хаяр çапăçусем [illegible] 4 танк тата 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра пирĕн войскăсем противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă. [illegible] высота [illegible] Н-ски часть çав высота çинче çирĕпленсе ларнă, вăл противникăн пур атакисене те сире-сире янă. Нимĕçсен 3 танкне, хăй тĕллĕн çўрекен 3 орудине тата противникăн пехотине пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă.

Прохладный районĕнче вăйлăн çапăçнă хыççăн пирĕн чаçсем çĕнĕ позицисем патне чакнă.

* * *

Воронежран кăнтăртарахра, Донăн хĕвеланăç çыранĕнчи халăх пурăнакан пунктра, урамсенче çапăçнă. Юлашки кунсенче çав пунктшăн пынă çапăçусенче противник, вилнисене кăна шутласан та, 800 салтакпа офицера çити сухатнă.

* * *

Могилев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен В. юлташ ертсе пыракан отрячĕ августăн пĕррремĕш çуррине нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 86 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Çав вăхăт хушшинчех партизансем противникăн пĕр поездне ўпĕнтерсе янă. Крушени пулнипе 14 оруди, 9 автомашина тата горючи тултарнă 80 пичкене яхăн пĕтнĕ.

* * *

Украинăн нимĕçсем йышăнса илнĕ районĕсенче выçлăх тата эпидеми сарăлса кайнă. Нимĕçсем, румынсем, итальянецсем, венгерсем сывалмалли учреждениесене, больницăсемпе аптекăсене çĕмĕрсе тăкнă. Врачсене совет граждăнĕсене медицина пулăшăвĕ пама чарнă. Каменец-Подольск облаçĕнчи Шаровка ялĕнче сарăлакан чир-чĕрпе тата выçăпа вуншар хресчен вилет. Август уйăхĕн пуçламăшĕнче фашистла ирсĕрсем старостăна тифпа чирленĕ 13 çынна Симоненко колхозницăн çуртне илсе пырса пăрахма хушнă. Палачсем çав çурта бензин сапнă та вут тĕртнĕ, мĕнпур чирлисене тата вăл çуртăн хуçине, Симоненкăна, хăйĕн хĕрĕпе тата ывăлĕпе пĕрле çунтарса янă.

* * *

Парижра Франци патриочĕсем урампа пыракан эсэсовецсен отрячĕ çине гранатăсем пăрахнă. Пилĕк гитлеровеца вĕлернĕ, тăххăрăшне амантнă. Бордоран инçех мар вырăнта паллă мар çынсем нимĕçсен çыранри хуралĕн çуртне тапăннă та, хĕçпăшалсем тытса илсе, тарса çухалнă.

Августăн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерў

Августăн 28-мĕш иран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç Ржев хули хĕррисенче, Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, çавăн пекех тата Прохладный, Моздок районĕсенче тата Краснодартан кăнтăртарахра çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем халăх пурăнакан пункта, противник çирĕплетнĕскере, йышăнса илнĕ. Нимĕçсем, хăйсен резервĕсене илсе пырса, темиçе хутчен контратака тунă, çав контратакăсене пирĕн боецсем сире-сире янă. Икĕ танк тата 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 7 пункта йышăнса илнĕ. Противника хирĕç пынă çапăçусенче нимĕçсен 13 танкне, 10 противотанковăй орудине тата 25 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 2 танк, бронемашина, темиçе оруди тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн войскăсем контратакăсем туса тăшмана пыра-пыра çапаççĕ, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пыраççĕ. Н-ски соединени, артиллерипе миномётсенчен персе, нимĕçсен 16 танкне тата противникăн пехотине пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан К. пункчĕн районĕнче нимĕç автоматчикĕсен пысăк отрячĕ пирĕн чаçсен тылне кĕрсе кайнă пулнă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене çийĕнчех çавăрса илнĕ те вĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç çапăçнă. Пĕр участокра нимĕçсем пирĕн войскăсен çапăçу йĕрки ăшне кĕрсе кайма пултарнă. Хаяррăн çапăçса, нимĕçсен 9 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 14 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра ту çулĕсем хĕресленсе тăракан вырăнти пункт патĕнче вăйлă çапăçусем пынă. Çав районра противникăн пур атакисене те сирсе янă, противника пысăк сухатусем тўстернĕ.

Прохладный районĕнче пирĕн войскăсем оборонăллă çапăçусем туса пынă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Гитлеровецсем вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, пирĕн подразделенисем противникăн оборонин пĕр узелне йышăнса илнĕ. Нимĕçсен çĕре чавса лартнă 3 танкне, темиçе пулеметне, винтовкисене тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалĕсене тытса илнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекен партизансен темиçе ушкăнĕ 4 кун хушшинче противникăн 6 çар эшелонне ўпĕнтерсе янă. 4 паровоз тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тиенĕ 150 платформăпа вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Нимĕç салтакĕ Иоганн хăйĕн пиччĕшĕ Карл патне яма çырнă çырăвĕнче, яма ĕлкĕрейменскерте, çапла çырать: «...Эсĕ малти позицире тăратăн, унта ытла та хăрушă. Эпĕ тылра тăратăп, анчах ĕнен, кунта та питĕ хăрушă. Партизансем пире кăнтăрла та, çĕрле те канăç памаççĕ. Май уйăхĕнче пире çынсем хушса панă, анчах эпир халĕ çĕнĕрен пысăк сухатусем тўсрĕмĕр. Иртнĕ эрнере пирĕн лавсем минăсем çине пулса çĕмĕрĕлсе пĕтрĕç, нумай салтак вилчĕ. Итле-ха, офицерсем çынсем пĕтнĕшĕн мар, хăйсен чемоданĕсем пĕтнĕшĕн ытларах хуйхăрчĕç. Офицерсемшĕн пулсан, вырăссенчен çаратса илнĕ япаласем салтаксен пурнăçĕнчен хаклăрах иккен. Тепре илсе каласан тата, вĕсем вăрçăра пуйни тахçанах паллă пулнă вĕт».

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче нимĕçсен 336-мĕш пехотнăй полкĕн 7-мĕш ротинчен тыткăна илнĕ салтак Штейн çапла каласа панă: «Артиллерирен çав тери вăйлăн персе тăни пирĕн батальонри салтаксене хăратса пусарса лартрĕ. Вырăссен танкĕсем пирĕн оборонăна сылтăмран та, сулахайран та татса кĕчĕç. Çав наступленилле çапăçусем пире вырăссен питĕ вăйлă техника пуррине кăтартрĕç. Эпир курни пире тĕлĕнтерсе хытарсах ячĕ. Пире яланах çапла калатчĕç вĕт: вырăссен ĕнтĕ нимĕн те çук — тупăсем те, самолетсем те, танксем те çук, тетчĕç».

Çав полкăн 9-мĕш ротинчи унтер-офицер Гейнц Бесхер çапла каласа панă: «Вырăссем наступлени тума пуçланă малтанхи кун эпĕ мĕн курнине, мĕн чăтса иртернине каласа пама та хĕн. Йĕри-тавра тамăк тăчĕ. Тĕнче пĕтес пекех туйăнчĕ. Вырăссем малтанхи куннех пирĕн оборонăна савалланса кĕрсе кайрĕç, трофейăсем нумай тытса илчĕç тата нумай çынна тыткăна илчĕç. Хирĕç тăма май юлмарĕ».

* * *

Юлашки вунă кун хушшинче Югославири партизансем нимĕçсемпе итальянецсен захватчикĕсенчен пĕр хула тата халăх пурăнакан темиçе пункт тытса илнĕ. Çав çапăçусенче оккупантсен 380 çын пĕтнĕ. Партизансем 372 винтовка, 14 пулемет, патронсем нумай тата çар пурлăхĕн складне тытса илнĕ.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Апат-çимĕç промышленноçĕн малта пыракан предприятийĕсем

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура пирĕн республикăри апат-çимĕç промышленноçĕн предприятийĕсем хăйсен ĕçне çĕнетсе лайăхлатрĕç. Хуласемпе районсенчи малта пыракан апат-çимĕç комбиначĕсем уйăхри плана срокчен тултарса, ĕçсыннисене кирлĕ продукцисене планран ирттерсе туса кăларассипе кĕрешеççĕ.

Шупашкарти апат-çимĕç комбиначĕ (управляющийĕ Е. Люминарская юлташ) иртнĕ уйăхри производство планне 112 процент тултарчĕ. Комбинат ку уйăхра та начар мар ĕçлет. Паянхипе тăваттăмĕш кун ĕнтĕ продукцисене уйăхри планран ирттерсе туса кăларать.

Комбинатра цехпа цех, бригадăпа бригада социализмлă ăмăртăва тухнă. Вĕсен ăмăртăвĕн итогĕсене кашни вунă кунрах туса тăраççĕ. Халь ăмăртура конфеткăсем пĕçерекен цех (мастерĕ К. Попова юлташ) малта пырать. Ку цех кулленхи ĕçсен заданине тикĕс тултарса пырать. Вера Вдовина, Анна Стрелкова работницăсем сменăри нормăсене 1,5 хут ирттерсе тултараççĕ. Премĕсем пĕçерекен цехри Александра Потатуева, Анастасия Инаева работницăсем те нормăпа палăртнинчен тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

Шупашкарти комбинатпа ăмăртакан Канашри апат-çимĕç комбиначĕ те юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Иккĕмĕш квартални программăна тата август уйăхĕнчи плана срокчен тултарчĕ. Халĕ коллектив плана кашни кунех ирттерсе тултарассишĕн кĕрешет. Ĕçсыннисем валли премĕсемпе конфетсем, булкăсемпе лапшасем планран ирттерсе туса кăларас ĕмĕтпе ĕçлеççĕ комбинатри рабочисемпе служащисем.

Комбинат управляющийĕ П. Захарова юлташ производствăна çĕнĕлле йĕркеленĕ. Ыранхи ĕçĕн заданийĕсене паянах парса хураççĕ, мастерсемпе бригадирсем вăл заданисемпе кашни работницăна паллаштараççĕ. Цехсенче тасалăхпа йĕркелĕх туса хунă.

Комбинат месткомĕ (председателĕ Н. Тумашик юлташ) бригадăсемпе уйрăм рабочисен социализмлă ăмăртăвне лайăх организацилесе ертсе пырать. Ăмăртура малта пыракансен результачĕсене кăтарту хăми çине кĕртеççĕ, стахановецсем çинчен стена хаçатĕнче çыраççĕ. Вата работницăсем хăйсен ĕçри опычĕсемпе çамрăк работницăсене паллаштараççĕ.

Цехсен ăмăртăвĕнче конфеткăсем тăвакан цех (бригадирĕ Антропова юлташ) тухăçлăрах ĕçлет. Вăл хăйĕн кулленхи заданине ытлашшипех тултарса пырать. Бригада членĕсем А. Терентьева, А. Сергеева, К. Горбунова юлташсем тăтăшах икшер норма тултараççĕ. Никитина юлташăн бригадинчи А. Севастьянова, И. Гурьева тата Григорьева работницăсем те икшер норма тăваççĕ.

Анчах апат-çимĕç промышленноçĕнче юлса пыракан предприятисем те пурха. Вĕсен ăмăртури задачи — малта пыракансемпе танлашасси пулать.

Августри плана тултарнă

Шупашкарти пир-авăр тĕртекен фабрика (заведующийĕ П. Сметанников юлташ) уйăхри производство планне августăн 28-мĕшĕнче каçхине 9 сехет тĕлне тултарчĕ. Коллектив çак çитĕнĕве пир-авăр промышленность предприятийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче мала тухассишĕн кĕрешсе турĕ. Август уйăхĕнче инженерсемпе техниксем производствăна тимлĕнрех ертсе пычĕç, рабочисемпе работницăсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç. Пирожкова, Ирен, Николаева тата ытти стахановкăсем сменăри нормăна кашни кун ирттерсе тултарчĕç.

Фабрика коллективĕ уйăх вĕçлениччен çĕршывпа фронт валли планран ирттерсе 22.000 метр пир-авăр туса кăларма ĕмĕтленет.

А. ЛОГИНОВ,
Фабрика директорĕ.

Ют çĕршывсенче

Иккĕмĕш фронт уçас тĕлĕшпе Англире пулакан митингсем

ЛОНДОН, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Берхенхейд хулинче (Чешир графстви) массăллă митинг пулса иртнĕ, вăл иккĕмĕш фронта уçма ыйтас лозунгпа пулса иртнĕ. Митинга организацилесе ĕçе хула мэрĕ тата мĕнпур политикăллă партисен ертсе пыракан органĕсем хутшăннă. Парламент членĕ либерал Грэхем Уайт тата лейборист Сильверман иккĕмĕш фронт уçассишĕн хĕрўллĕ сăмахсем тухса каланă.

Ньюкасл хулинче пулнă конференци Европа континентĕнче наступлени тума чĕнекен резолюци йышăннă, çав конференцире строительствăри рабочисен тĕрлĕ профсоюзĕсен делегачĕсем пулнă. «Дьепп районне рейд тунă,—тенĕ резолюцире,—пирĕн халăхăн хаваслăхне çĕклерĕ, çакă вара гитлерла Германие хирĕç наступлени тума пулăшас тесе çынсем пĕтĕм вăя хума хатĕррине кăтартса парать. Эпир правительствăна Хĕвеланăçĕнче иккĕмĕш фронт уçма чĕнетпĕр, çак иккĕмĕш фронт гитлерла Германие çĕмĕрсе тăкма тата çĕнтерў тума пулăшать».

Иккĕмĕш фронт уçассишĕн США-ра пыракан движени

НЬЮ-ЙОРК, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Нью-Йорк районĕнчи университетсенче ĕçлекен паллă 45 педагог, иккĕмĕш фронта халех уçма чĕнсе, Рузвельт патне çыру янă. Педагогсен çырăвĕнче çапла каланă: «Иккĕмĕш фронт уçассипе çыхăнса тăракан кирек мĕнле обязательствăсене те пурнăçа кĕртме эпир хамăр енчен мĕн вăй çитнĕ таранах пулăшма сăмах паратпăр. Иккĕмĕш фронт уçас ыйтуран пăрăнма хăтланакан элементсене эпир сивлетпĕр», тенĕ.

Гоосс-Вэллири (Калифорния) электропромышленноçра ĕçлекенсен профсоюзĕн членĕсем, Лос-Анжелосри тата ытти çĕрти электрик-рабочисем президент патне çавнашкал çырусемех янă.

Нью-Йорк районĕнчи производствăллă профсоюзсен конгресĕн центрĕ Рузвельт адресĕпе çырнă почтовăй открыткăсем пĕр миллион салатнă та ĕнтĕ тата иккĕмĕш фронта халех уçма чĕнекен брошюрăсемпе листовкăсем 800.000 ытла салатнă. Çак кунсенче тухнă иллюстрациллĕ, лозунгсемлĕ листовка анлăн сарăлать. Çав листовкăра: «Мистер президент, эпир сирĕппе пĕрле», «Иккĕмĕш фронта халех уçмалла!», тесе çырнă.

Совет Союзĕпе Америка хушшинчи çыхăнусем тĕлĕшпе ĕçлекен Советăн председателĕ Ламонт иккĕмĕш фронта халех уçма чĕнекен брошюрăсем 100.000 экземпляр кăларнă.

АМЕРИКĂРИ ПРОФСОЮЗСЕМ ФИНЛЯНДИЕ ХИРĔÇ ВĂРÇĂ ПУÇЛАМА ЫЙТАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Лос-Анжелосри производствăллă профсоюзсен конгресĕн (КПП) отделенийĕн ертсе пыракан органĕсем, çавăн пекех тата электриксемпе пулăçсен профсоюзĕсен отделенийĕсем те резолюцисем йышăннă. Çав резолюцисенче вĕсем Маннергейм правительствине хирĕç вăрçă пуçлама Рузвельта чĕнсе каланă. Резолюцисенче çакна палăртнă: «Финляндири базăсемпе тăшман Америка пароходчĕсене путарнă çĕрте усă курать, çав пароходсем çинче пирĕн тăвансем пĕтеççĕ», тенĕ.

Гитлерла çынçиенсен юнлă планĕсем

„Хĕвелтухăçне германизацилес“ задачăсем çинчен Гиммлер „ăнлантарса пани“

СТОКГОЛЬМ, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Гиммлерăн «Дас шварце кор» хаçачĕ нимĕçсен «Хĕвелтухăçне германизацилемелли» планĕсем çинчен «ăнлантарса панă».

Гестапо органĕ пĕр намăса пĕлмесĕр çапла çырать: «Германин малашлăхне Германи империйĕ пĕтĕм тĕнчере пуç пулса тăни кăна шанчăк пама пултарать, çав малашлăха хĕçпе çĕнтерсе илмелле». «Пулас империн» хăрушсăрлăхне, уйрăмах Хĕвелтухăçĕнче, тытса тăмалли шанчăка гитлерла вăрă-хурахсем хăйсем çĕнтернĕ халăхсене вĕлерсе пĕтерниччe, вĕсен çĕрĕсене тытса илсе, вĕсене нимĕç колонисчĕсен аллине паниччe кураççĕ. Çавăн çинчен хаçат илсе кăтартакан Гиммлерăн заявленийĕнче тўрремĕнех каланă. «Пирĕн задача,—тенĕ çав обер-палач,—Хĕвелтухăçĕнче чăннипех те нимĕç юнлă çынсем пурăнмалла тăвасси пулса тăрать».

Германирен миллионшар çынсем çĕнĕ çĕре куçса каясси çинчен, вĕсем вырăссемпе белоруссен, украинецсен, поляксен çĕрĕсемпе çуртйĕрĕсенче вырнаçасси çинчен, Хĕвелтухăçĕнче «нимĕç расси çинче никĕсленсе çынсем ĕрчетме» тытăнасси çинчен сăнласа çырать çав хаçат. Анчах та гитлерла çынçиенсем мĕнпур халăхсене пуçĕпех вĕлерсе пĕтерме май çуккине те шута илеççĕ. Нимĕç юнĕ çук çынсене, чĕрĕ тăрса юлакансене, гитлерла хуçасен чурисем туса хурас шăпа тивет.

Çакнашкал ĕнтĕ, хăйсем каланă тăрăх, нимĕç çынçиенĕсен планĕсем.

„Дейли Уоркер“ хаçата кăларма ирĕк панă

ЛОНДОН, августăн 27-мĕш. (ТАСС). «Дейли Уоркер» хаçатпа «Уик» журнала кăларма чарнине,—вĕсене кăларма 1941 çулти январĕн 1-мĕшĕнче чарнă пулнă,—Шалти ĕçсен тата шалти хăрушсăрлăхăн министрĕ Моррисон пăрахăçа кăларнă.

---o---

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

УЙХИРТЕ ПĔР ПУЧАХ ТА, ПĔР ПĔРЧĔ ТЫРĂ ТА ХĂВАРМАЛЛА МАР

«Уйхирте пĕр пучах та, пĕр пĕрчĕ тырă та хăвармалла мар»,—çавăн пек задача лартнă хăйсем умне Арменири пионерсемпе шкул ачисем. Кировоканскри районри Дибент ялĕнчи колхозра вĕсем 2.500 килограмм пучах пуçтарнă. Камарлински районри пионерсен пĕр отрячĕ 16 кун хушшинче пучахсем пухса 1.600 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе илнĕ.

(ТАСС).

КАЗАХСТАНРИ КОЛХОЗНИКСЕМ ИР ÇИТĔНЕКЕН ТĔШТЫРĂСЕНЕ ÇУРРИНЕ ЫТЛА ПУХСА КĔРТНĔ

Казахстанри колхозниксем ир çитĕнекен тĕштырăсене çуррине ытла пухса кĕртнĕ ĕнтĕ. Августăн 20-мĕш тĕлне вĕсем пĕлтĕр çак вăхăта çулнинчен 729 пин гектар ытла тырă çулнă.

КУЛЛЕН 300 ТОННА ÇĔРКĂМРĂК

«Куйбышевуголь» тресчĕн Орджоникидзе ячĕпе тăракан шахтинче август уйăхĕнче нумайччен ĕçлемесĕр выртнă икĕ çĕркăмрăк участокне ĕçе янă. Çав участоксем куллен 300 тонна çĕркăмрăк параççĕ те ĕнтĕ. Пĕрремĕшпе пиллĕкмĕш участоксенче ĕçлемесĕр ларнă 3 врубовой машинăна ĕçе янă. 4-мĕш участокри горняксем август пĕтнĕ çĕре талăкра 300 тонна çĕркăмрăкĕ яхăн пама пултаракан çĕнĕ сие ĕçе яраççĕ. 7-мĕш участокра çĕркăмрăкĕн çĕнĕ çийĕсене тупаççĕ, сентябрьте малтанхи икĕ сийрен çĕркăмрăк кăларма тытăнаççĕ.

Румынире таркăнсене массăлл ухтарни

ЖЕНЕВА, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Румынин мĕнпур хулисенче таркăнсене полици массăллăн ухтарса йĕрлесси пулса пырать. Чаçсенчен тарнă е çар повинноçĕнчен пăрăннă нумай çынсене ĕнер тытса чарнă. Бухарест хулинче хăйсем кам пулнине ĕнентерекен документсем çук çынсене 8.000 çынна яхăн тытса чарнă.

Египет фронтĕнчи лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 27-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: августăн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи войскисем фронтăн вăтаçĕр участокĕнче Эль-Мареир районне ăнăçлă рейд тунă, противника çухатусем кўнĕ тата унăн салтакĕсене тыткăна илнĕ. Çак ĕçре противникăн позицийĕсем çине персе тăракан артиллери пулăшнă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем активлăн кĕрешнĕ. Англи самолечĕсем противникăн çыран хĕрринчи çулпа куçакан транспорт колоннисем çине вĕçсе пыра-пыра тапăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чебоксарский Коммунально-строительный техникум объявляет, что занятия в техникуме начнутся 1 октября 1942 года. Прием заявлений продлен до 20 сентября.

Об условиях приема смотрите в газете «Красная Чувашия» за № 163.

ДИРЕКЦИЯ.

Накладную за № 1363 от 27 февраля 1942 г. о сдаче винной посуды Шигаевским сельпо Марпосадского района Чебоксарскому ликеро-водочному заводу на сумму 562 руб. считать недействительной.

Правление Сельпо.

РАЗЫСКИВАЕМ ЛОШАДЬ.

Приметы: караковой масти, грива на правую сторону, возраст 27 лет. О местонахождении сообщить по адресу: Колхоз «XIV лет Чувашии», Мариинско-Посадского района.

ЗАДЕРЖАНЫ ДВЕ ЛОШАДИ:

Приметы: 1) жеребец пестрой масти, 2) кобылица рыжей масти, на лбу белая полоса.

Справляться по адресу: колхоз «Коммунист», Ишлейского района.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Августăн 27-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн XVII пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум хулари промышленность предприятийĕсем валли çĕрулми тата пахча-çимĕç хатĕрлес ĕçсем çинчен сўтсе яврĕ. Ку ыйтупа ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ М. Романова юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад тăрăх прением Бахарев («Росглаввино» совхозĕ), Каплин, Кузнецова (хула Совет исполкомĕн çĕрĕç пайĕ), Бенский, Герасин (столовăйсен тресчĕ), Воротилов (Промсоюз), Масленников (Чебторг), Григорьев (НКВД), Воронцов (торф предприятийĕ), Никитин (Суту-илў халăх комиссарĕ) юлташсем тухса каларĕç.

Юлашкинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн тата хула комитечĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче хулари халăх валли çĕрулми тата пахча-çимĕç хатĕрлес ĕç пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртать.

Кăçал Шупашкар хулинчи ĕçсыннисем валли пахча-çимĕç çителĕклĕ хатĕрлеме май пур. Пахча-çимĕç хатĕрлес енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйсем лайăххрах ĕçлени кăна кирлĕ. Предприятисен колхозсене, районсене шефа илес пулать те ялхуçалăхĕнчи ĕçсене, уборкăна ирттерессинче пулăшас пулать. Ку енĕпе партин хула комитечĕ нимĕн те туман. Пĕр предприяти те колхозсене шефа илмен-ха. Хулари суту-илў организацийĕсен пахча-çимĕç хатĕрлес тĕлĕшпе иртнĕ çулти урокĕсене шута илес пулать, вĕсем пĕлтĕр хулана пахча-çимĕçсĕр хăварчĕç. Кăçал партин хула комитечĕн пахча-çимĕç хатĕрлессипе ĕçлекен руководительсенчен хытă ыйтас пулать. Пахча-çимĕç турттарма транспорт хатĕрлемелле. Пахча-çимĕç хатĕрленĕ çĕртех тăварлас ĕçе организацилемелле, колхозсенчех катка-пичкесем, складсем тупма тăрăшмалла, çĕрулмие çĕр шăтăкĕсене хурса усрас ĕçе тумалла. Пахча-çимĕç хатĕрлес ĕç —государствăн пысăк ĕçĕ. Çак ĕçе кирлĕ пек организацилес пулать.

ВКП(б) хула комитечĕн пленумĕ ку ыйтупа тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Хулари промышленность предприятийĕсемпе суту-илў организацийĕсен руководителĕсем подсобнăй хуçалăхсенче çĕрулми тата пахча-çимĕç нумайрах туса илессипе сахал ĕçленĕ, ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕçе те кирлĕ пек туса пыни çук. Пĕрремĕш номерлĕ типографи, Стройтрест тата Водосвет руководителĕсем хăйсен предприятийĕсене валли пахча-çимĕç хатĕрлес тесе пĕртте тăрăшмаççĕ.

Çавăн пекех пахча-çимĕçсене тăратас тĕлĕшпе колхозсемпе договорсем тăвас ĕç те начар пулса пырать. Августăн 25-мĕш тĕлне Чебторг планăн 57 процентĕ чухлĕ, столовăйсен тресчĕ планăн 25 процентĕ чухлĕ кăна пахча-çимĕçсем илме колхозсемпе договорсем тунă.

Промышленность предприятисенчи рабочисене, служащисене, инженерсемпе техниксене валли çĕрулми тата пахча-çимĕç хатĕрлес ĕç пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса, пленум ВКП(б) хула комитечĕн бюровĕпе хула Совет исполкомне çак ĕçе лайăхлатма, пахча-çимĕçсене çулталăка çитмеллĕх хатĕрлесе хумашкăн татăклă ĕçсем тума хушрĕ. Ку тĕлĕшпе подсобнăй хуçалăхсенчи пахча-çимĕçе вăхăтра тата тĕплĕн пухса кĕртмелле, пахча-çимĕç хатĕрлемелли плансене тултармалла, çĕрулмие тата пахча-çимĕçе тирпейлĕ упрамалла, перекетлĕ тыткаламалла. Предприятисен столовăйĕсенче, буфечĕсенче тата ача-пăча учрежденийĕсенче çĕрулми тата пахча-çимĕç пĕрмаях пулмалла, çак ĕçшĕн ответлăха предприятисен директорĕсемпе пуçламăш парторганизацисен секретарĕсем çине хунă.

Рабочисене апат-çимĕç тăратакан отделсен (ОРС-сен) тата суту-илў организацийĕсен предприятири рабочисемпе служащисене валли çителĕклĕ чухлĕ çĕрулми тата пахча-çимĕç хатĕрлес пулать. Пахча-çимĕç усрамалли вырăнсене, хранилищĕсене сентябрĕн 15-мĕшчен юсаса тата çĕнĕрен туса çитермелле.

Предприятисен çумĕнчи хуçалăхсен парникĕсене йĕркелемелле, çĕнĕ парниксем тумалла. Çапла вара хĕллехи вăхăтра та пахча-çимĕç ўстермелле.

Пленум предприятисенчи пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене пахча-çимĕç тата çĕрулми хатĕрлес ыйтăва рабочисемпе служащисен пухăвĕсенче сўтсе явма хушрĕ.

Пахча-çимĕç хатĕрлес ĕç мĕнле пулса пынине пуçламăш парторганизацисен секретарĕсен куллен тĕрĕслесе тăмалла, çак ĕçе коммунистсене, комсомол тата профсоюз организацийĕсене хутшăнтармалла.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0-67, редакци секретарĕн — 4-26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3-99, ялхуçалăх пайĕн — 5-31, издательство конторин — 0-23.

НТ 1362 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф б. 58 84 п. л.